# ЭПИР ОЛИГАРХ АЧИСЕМ МАР

**Çĕнĕ çул уявне Калайкасси шкулĕнче çĕнĕлле кĕтсе илме шутларĕç. Ытти çулсенче уяв ачасемпе вĕрентекенсем хастар хутшăннипе иртетчĕ пулсан, кăçал елкăна шкул администрацийĕ чăн-чăн артистсене чĕнчĕ. Паллах, вĕсем тӳлевсĕр ташласа-юрласа памаççĕ. Çавăнпа та вĕренекенсенчен 50-шар тенкĕ пухма шут тытрĕç.**

Анчах та пурне те çакăн пек япала килĕшмерĕ. Пĕр вăхăт хушши тăхтавсенче шкул ачисем тавлашнине курма пулатчĕ. Пĕрисем шкулта Çĕнĕ çул уявĕ тӳлевлĕ, теприсем — тӳлевсĕр иртмелле тесе тупăшатчĕç. Вĕрентекенсем умĕнче вара йывăр ыйту сиксе тухрĕ. Классенче çурри ытла — нумай ачаллă тата тулли мар çемьесенче пурăнаканнисем. Хăшĕ-пĕрисен çемйисенче ашшĕ-амăшĕсенчен пĕри те пулин ĕçсĕр ларать. Çавăнпа та, хăвăр ĕнтĕ пĕлетĕр, укçа-тенкĕ часчасах çитменни пулкалать. Ăнлантăр пулĕ, пур ашшĕамăшĕ те хăйсен ачисене елкăна ярайманççĕ.

Шутласа пăхар-ха, çемьере пĕрре-иккĕ мар, виççĕ тата нумайрах ача пулсан ашшĕ-амăшсене Çĕнĕ çул уявĕ еплерех хака ларать? Ачасене пылак парнесемпе те савăнтарас килет. Вĕсем вара йӳнĕ мар — хакĕ 60-80-ран пуçласа 200 тенкĕ таран. Елкăна тăхăнмалли костюм хакĕ 1-3 пине çитет.

Мишура – 15-50 тенкĕ, хлопушка, бенгал çуртисем – 50 тенкĕ. Унсăр пуçне ачасем ашшĕ-амăшне е вĕрентекенсем валли мĕн те пулин туянаççĕ. «Хĕл мучи» те парне хатĕрлет — сахалтан та тепĕр 200 тенкĕ кăларса хур. Çапла вара пĕр ачана елкăна хатĕрлеме укçатенкĕ хĕссерех тытакан вăтам çемье те 1000 тенкĕрен кая мар тăкакланать.

Ну юрĕ, кун пек тăкаксем хыççăн тепĕр 50 тенкĕ нимĕн те мар тейĕпĕр. Аса илĕрха кĕçĕн классенче Çĕнĕ çул умĕн çине тăрса юрă-ташă, сăвă вĕреннине. Кашни репетицинех юлаттăмăр. Пĕрпĕринпе тупăшсах вĕренеттĕмĕр. Костюмсене те хамăр алăпах ăсталама тăрăшаттăмăр. Кам картонсенчен хăйне валли робот тăвать, кам разбойник костюмне ăсталать, кам – Юрпике, кам – шуйттан çури... Мĕн пек кĕтеттĕмĕр Çĕнĕ çула! Кăçал вара юрă-ташă вĕренни ним тума та кирлĕ пулмарĕ. Репетицине тăрăшса çӳрекенни те, халиччен пĕр юрă-ташă вĕренменни те – пĕр тан. Çук, пĕр тан мар! Марльăран хăйсен аллипе çĕленĕ кĕпе тăхăннă хĕр ачапа 3-5 пинпе илнĕ платьăллă хĕр ача çине пăхсан Çĕнĕ çул уявĕ пуриншĕн те пĕр пек иртрĕ тесе ниепле те калаймăн. Кун пек елка пултаруллă ачасемшĕн мар, укçатенкĕллĕ ашшĕ-амăшĕсемшĕн иртрĕ. Çитес çул ытти ашшĕ-амăшĕн хăть çурăлса кай, анчах та вĕсен те ачасен кăмăлне хуçас мар тесе çавăн пек чаплă тум-тир илсе памах тивет.

Тен, шкул форми пек Çĕнĕ çул елкине те хăйсен аллипе килте çĕленĕ костюмсемпе килсен аванрах. Тен, ашшĕ-амăшĕн енчĕкне пушатма мар, ачасен пултарулăхне пур енлĕн аталантарма тăрăшмалла

**МАРГАРЕТТА**
**КАЛАЙКАССИ шкулĕ**

# ЮМАХРИ АСАМЛĂ ВĂРМАН



/Пуçл. 1-мĕш стр./

Пирĕн класс та ыттисенчен юлас темерĕ. Ара, халиччен эпир юмахри асамлă сăнара, аçтахана, суйласа илтĕмĕр.

Çакăн пек кăткăс кĕлеткене юртан ăсталама çăмăл мар, анчах çав тери интереслĕ пулчĕ. Паллах, аçтахана пĕрремĕш кунтах туса пĕтереймĕн. Малтанхи кунне эпир кĕлеткен пысăк пайне хатĕрлеме кăна ĕлкĕртĕмĕр. Тепĕр кунне сада тухрăмăр та... пирĕн умра аçтаха çурри кăна тăрать!

Юр кĕлеткен çӳлти пайне такам тăрăшсах аркатнă. Пирĕн ĕçе чарас тенĕ пулин те эпир парăнмарăмăр— çав кунах аçтахана юртан туса лартрăмăр. Шкул садне кан-ма кăна, часах вĕçсе каяс пек



тăххăрмĕшсемсĕр шкулта пĕр мероприяти те иртмен! Çавăнпа эпир кунта та активлă хутшăнас терĕмĕр. Юртан кĕлетке тума çăмăл ĕç мар-çке. Кунта пултарулăх, чăтăмлăх кирлĕ. Унсăр пуçне— фантази! Хĕл Мучипе Юр Пикене юртан тунипе халĕ никама та тĕлĕнтереймĕн, çавăнпа та ларать аçтаха.

Шкул ачисем иртнĕ хĕлле кăçалхи пек юртан кĕлеткесем хастаррăн тума тытăнманччĕ. Тен, çакă ачасем чăн-чăн хĕллене кĕтнипе, сивĕ кунсемсĕр тунсăхланипе çыхăннă-ши?

**Оля КОШКИНА,**
**Калайкасси шкулĕ**

# ÇАК КУН ИСТОРИРЕ

### Кăрлачăн 26-мĕшĕ

*1897 çул* —Александр Чижевский, гелиобиологи ăслăлăхне никĕслекенсенчен пĕри çуралнă.

*1904 çул* — Яппун çĕршывĕ Порт-Артур çине тапăнать. Вырăс-яппун вăрçи пуçланать.

### Кăрлачăн 27-мĕшĕ

*1837 çул* — Пушкинпа Дантес хушшинче дуэль пулса иртет.

### Кăрлачăн 29-мĕшĕ

*1902 çул* — Совет экранĕн киноçăлтăрĕ Любовь Орлова çуралнă.

### Нарăсăн 1-мĕшĕ

*1715 çул* — Санкт-Петербургра Кунсткамера уçаççĕ.

*1806 çул* — Владимир Корнилов вице-адмирал çуралнă. 1854 çулта Севастополе хӳтĕлесе вилет.

### Нарăсăн 7-мĕшĕ

*1920 çул* — Александр Колчак адмирала персе вĕлереççĕ. Нумай вăхăт хушши ăна Совет патшалăхĕ тăшман тесе шутлаттарнă.

# Çитес номерте

**Арсений Тарасов — паллă журналист. Пултарулăх вăрттăнлăхĕсем**